УДК 821.512.111.09«2011/2020»
ББК 83.3(2=635.1)64

*Ăслăлăх статйи*

# ЧĂВАШ ЛИРО-ЭПИКИН 2011 — 2020 ÇУЛСЕНЧИ АТАЛАНĂВĔ

**И. В. Софронова**
И. Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ,
Шупашкар хули, Раççей
Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ,
Шупашкар хули, Раççей
muxtar2@yandex.ru

***Аннотаци.*** Статьяра 2011 — 2020 çулсенчи чăваш литературинчи лиро-эпикăллă хайлавсене тишкернĕ. Тĕпчев ĕçĕн никĕсĕнче — Г. Юмартăн, А. Малышевăн, Ю. Санăн, С. Асаматăн, Г. Кĕмĕлĕн, Г. Матвеевăн, Н. Карлинăн тата ытти авторăн хайлавĕсем. Паянхи чăваш лиро-эпики халичченхи поэзи традицийĕсене малалла аталантарать. Çакă фольклор материалĕпе усă курнинче, традицилле темăсене хускатнинче, лирикăллă тата эпикăллă поэмăсем, сăвăлла роман, балладăсем çырнинче палăрать. Чылай авторшăн халăхăн, несĕлсен кун-çулне тĕпчесси, иртнипе хальхин çыхăнăвне кăтартасси, халăх сăмахлăхĕн тата тăван чĕлхен пуянлăхĕпе хăй евĕрлĕхне кăтартасси курăмлă. Сăвăçсем илемлĕ хайлавăн тытăмне калу, шырав, тĕпчев, çул çӳрев мелĕсемпе йĕркелеççĕ.

*Тĕп сăмахсем*: лиро-эпика, поэма, баллада, паттăрлăх, фольклоризм, тишкерӳ, паянхи чăваш поэзийĕ
*Цитатăлама*: Софронова И. В. Чăваш лиро-эпикин 2011 — 2020 çулсенчи аталанăвĕ // Хальхи гуманитаристика. 2025. 1 т. 3 №. С. 137 — 143

© Софронова И. В., 2025

*Научная статья*

# РАЗВИТИЕ ЧУВАШСКОЙ ЛИРО-ЭПИКИ 2011 — 2020 ГОДОВ

**И. В. Софронова**
Чувашский государственный университет им. И. Н. Ульянова,
г. Чебоксары, Россия
Чувашский государственный институт гуманитарных наук,
г. Чебоксары, Россия
muxtar2@yandex.ru

***Аннотация.*** В статье проводится обзор чувашских лиро-эпических произведений, созданных в 2011 — 2020 гг. В основе исследования — произведения Г. Юмарта, А. Малышева, Ю. Сана, С. Азамат, Г. Кемел, Г. Матвеевой, Н. Карлина и других авторов. Современная лиро-эпика продолжает традиции, сформировавшиеся до сегодняшнего дня в чувашской поэзии. Это проявляется в использовании фольклорного материала, общепринятых тем, развитии особенностей лирических, эпических поэм, романа в стихах и баллады. Для многих авторов характерен интерес к исследованию истории народа, жизни предков, демонстрация связи прошлого и современности, богатства фольклора и своеобразия родного языка. Композиция художественного произведения строится на основе рассказа, поиска, исследования и путешествия.

*Ключевые слова*: лиро-эпика, поэма, баллада, патриотизм, фольклоризм, обзор, современная чувашская поэзия
*Для цитирования*: Софронова И. В. Развитие чувашской лиро-эпики 2011 — 2020 годов // Современная гуманитаристика. 2025. Т. 1. № 3. С. 137 — 143

*Scientific article*

# DEVELOPMENT OF CHUVASH LYRIC-EPIC IN THE PERIOD OF 2011 — 2020

**I. V. Sofronova**
I. N. Ulyanov Chuvash State University,
Cheboksary, Russia
Chuvash State Institute of Humanities,
Cheboksary, Russia
muxtar2@yandex.ru

***Abstract.*** The article overviews the Chuvash lyric-epic works in the period of 2011 — 2020. The study is based on the works of such authors as G. Yumart, A. Malyshev, Y. San, S. Azamat, G. Kemel, G. Matveeva, N. Karlin and the others. Modern lyric-epic continues the traditions having been formed up to present in Chuvash poetry. Folklore material, generally accepted themes, the development the peculiarities in lyric, epic poems and a novel in verse and ballads are the examples. Many authors are interested in studying the history of the people, the life of their ancestors, demonstrating the connection between the past and the present, the richness of folklore and the originality of the native language. The composition of fiction is based on a story, search, research and traveling.

*Keywords*: lyric-epic, poem, ballad, patriotism, folklorism, review, modern Chuvash poetry

*For citation*: Sofronova I. V. Development of Chuvash lyric-epic in the period of 2011 — 2020 // Modern humanities. 2025;1(3):137 — 143

## Кӳртӗм

Паянхи чӑваш литературинче кулленхи пурнӑҫа сӑнлама, хумхантаракан ыйтусене сӑнарлӑн палӑртма сӑвӑҫсем лиро-эпикӑн тӗрлӗ жанрӗпе усӑ кураҫҫӗ. XXI ӗмӗрӗн иккӗмӗш вунӑ ҫуллӑхӗнче вулакан патне лирикӑллӑ поэма, эпикӑллӑ поэма, баллада, сӑвӑлла роман тӗслӗхӗсем ҫитрӗҫ. Пултарулӑх ӗҫӗнче профессионал сӑвӑҫсемпе пӗрле тӗрлӗ тӑрӑхра пурӑнакан таврапӗлӳҫӗсем те палӑрчӗҫ. Самана лӑпкӑ пулнине кура лиро-эпикӑллӑ хайлавра тӑван тӑрӑхӑн, халӑхӑн аваллӑхне тӗпчесси, тин кӑна пулса иртнӗ историллӗ пулӑмсене хак парасси, ӗмӗрхи ыйтусене хускатасси характерлӑ. Ҫавӑн пекех сӑвӑҫсене халӑх кун-ҫулӗнчи синкерлӗ тапхарӗсем те хумхантараҫҫӗ.

Пирӗн тӗпчев ӗҫӗн тӗллевӗ — чӑваш ҫыравҫисен 2011 — 2020 ҫҫ. пичетленсе тухнӑ лиро-эпикӑллӑ хайлавӗсене пӗтӗмӗшле тишкерсе тухасси, вӗсен уйрӑмлӑхӗсене, илемлӗх шайне палӑртасси, маларахри литературӑри тӗслӗхсемпе танлаштарасси.

## Тӗпчев материалӗсем тата меслечӗсем

Статьяра чӑваш сӑвӑҫисен 2011 — 2020 ҫҫ. «Тӑван Атӑл» журналта, уйрӑм кӗнекен е хайлавсен пуххинче пичетленнӗ лиро-эпикӑллӑ хайлавсене пӑхса тухнӑ. Сӑнлав, тишкерӳ, танлаштару тӗпчев меслечӗсемпе усӑ курнӑ. Тишкерӳ, сӑнлав меслечӗсем хайлавсен тытӑмӗн хӑйевӗрлӗхне, сӑнарлӑх системине, чӗлхе уйрӑмлӑхӗсене, жанр традицийӗсене палӑртма май параҫҫӗ. Танлаштару мелӗ сӑвӑҫсен хайлавӗсенчи традицилӗхе асӑрхама пулӑшать: фольклор материалӗпе усӑ курни, ҫивӗч ыйтусене хускатни, вӗсене маларахри тапхӑрсемпе танлаштарсан, ҫӗнӗлле кӑтарса пама пултарни, хайлавра вырӑс тата чӑваш классикин витӗмӗ пурри. Калӑпӑшӗпе пысӑк, кӑсӑк жанр пулнӑран-тӑр —иртнӗ вунӑ ҫуллӑхра лиро-эпикӑллӑ хайлав ҫырма кӑмӑллакансем йышлах пулманни курӑнать.

## Тӗпчев результачӗсем, вӗсене сӳтсе явни

Вӑхӑчӗ сахал иртнӗрен-ши, 2011 — 2020 ҫҫ. тухнӑ поэзи кӗнекисене, ҫак тапхӑрти поэмӑсене пӗтӗмӗшле хак паракансем пулмарӗҫ-ха. Ҫырнисен пуххин ум-

сăмахĕ е пĕр-пĕр хаçатра е журналта пичетленнĕ кĕнеке издательствин ĕçченĕсем çырнă рецензисемсĕр пуçне урăх хаклавсем çук. Вăхăт аливи тĕр тухман хайлавсене туллин хак пама, тен, хальлĕхе иртерех те. Ятарласа çак ыйтупа ĕçлемесен хăш-пĕр ятсем илтĕнмесĕрех, литература историйĕнче йĕр хăвармасăрах юлĕç. Кĕнеке тухнă ятпа пĕчĕк йышпа пухăнса калаçса ларнисĕр пуçне ун пирки тек шавлаканĕ пулмасан та пултарать. Шайĕ тĕрлĕрен пулсан та — паянхи чăваш поэзийĕ, çав шутра лиро-эпики те, пурăнать тесе çирĕппĕн калаятпăр. «Чăваш литератури типсе, хăрса пыракан йывăç мар. Йĕкелĕ пулсан туйралăх шăтать. Чăваш чĕлхи — вăл хай поэзи. Çавнашкал чĕлхепе мĕнле сăвă ан çырăнтăр?» [10]. Çав хушăрах чăваш прози çĕнĕ XXI ĕмĕрте еплерех аталанса пынине тишкерсе çырнă статьясем çине-çинех пичетленеççĕ [5; 6].

Г. Юмарт чăвашăн авалхи кун-çулĕнче паллă йĕр хăварнă çынсем çинчен поэмăсем çырассине малалла тăсать [8, с. 125]. 2011 ç. «Тăван Атăл» журналта вăл «Модэ патша», «Кул Гали», «Ылтăн хĕç» хайлавсем пичетлет. Вĕсенче мухтавлă çынсен кун-çулне, вĕсен пĕлтерĕшне сăнласа парать. Вĕсемпе паянхи чăваш хушшинче çыхăну пуррине кăтартать. Хайлава паллă çын аваллăх тата паттăрлăх тӳпинчен пĕтĕмлетӳллĕ шухăш калана евĕр е ун çинчен калуçă каласа панă пек йĕркеленĕ. «Улшăну кĕнеки» поэмăра лирика харкамçи авалхи китайсен «Улшăнусен кĕнеки» хайлавăн пĕлтерĕшĕ çинчен шухăшлать. Унта чăваш тĕнче курăмне çывăх паллăсем пуррине асăрхать вăл: этем çут çанталăкпа пĕр пулни, сар кайăк сăнарĕ тата ыттисем те.

Тĕрлĕ тăрăхра пурăнакан таврапĕлӳçĕсем те сăмахлăх пуянлăхĕпе усă курса халăхăн аваллăхĕ, çуралнă ялĕн кун-çулĕ, унти паллă вырăнсем çинчен каласа парас туртăмлă. Ӳрмек Вaçли (В. М. Пузырев) Муркаш тăрăхĕнчи Сар тон ятлă вырăн пирки калакан халапсене пĕр çĕре пуçтарса «Сартон» (2016) трагедиллĕ новелла хайлать. С. Куснар (С. А. Иванов) «Этем кун-çулĕ» (2014) сăвăлла романра XX ĕмĕр пуçламăшĕнче Сĕнтĕрвăрри тăрăхĕнче пулса иртнĕ историллĕ пулăмсене сăнлать. А. Малышев, Тăхăръял чăвашĕ, калас сăмахĕ нумай пулнине кура, вăрăм сăвăсем е поэмăсем çырать. Вĕсене «Пуç сырман шухăшсем» (2020) кĕнекене пуçтарса пичетленĕ. Хайлавсенче тăван тăрăхăн историйĕ, тутар-монголсен вăхăчĕ, улпутсем хуçаланни, патша хресченĕсем пулни, йăла-йĕрке пуянлăхĕ тата ытти те сăнарланнă. Хăйĕн шăпи çинчен те каласа парать автор: малтанхи савнийĕ урăххине качча тухни, Çĕпĕр вăрманĕ тăрăх телей шыраса çӳрени, тĕнчене сăвăç пулса килнишĕн яваплăха туйни. Лирика харкамçине ытларах аваллăх ыйтăвĕ хумхантарать. «Арман» элегире вăл аслашшĕ лартса хăварнă çил арманĕ пирки сăмах пуçарать. «Авалхи тухьясен хӳхлевĕ» поэмăра Такăрвар ялĕн кунçулĕ тĕпре. Пайпулат тăрăхне хаяр тăшман килет. Унпа ар паттăрсем, хĕр паттăрсем, ватти-вĕтти тата вырăнти ыр-хаярсем кĕрешеççĕ. Тăшман халĕ те чăваша пĕтерме ăнтăлать. Анчах вăл авалхи пек хĕçпе тапăнса килмест, интернет урлă, пирĕн пурнăçа çăмăллăхсем кĕртсе тăван чĕлхене пĕтерме тăрăшать. Сăвăç авалхи халапа паянхи пурнăçпа çыхăнтарать, чĕлхене упрама кирлине асăрхаттарать.

Чăвашăн аваллăхĕ С. Асамата та хумхантарать. Вăл 2020 ç. «Чăн сăмахăн суйи çук…» автобиографиллĕ, историпе публицистикăллă, халаплă-юмахлă поэма пичетлесе кăларать. Нумай çул хушши чăвашăн аваллăхĕ, пĕлтерĕшĕ, пуласлăхĕ пирки тĕпчесе, шухăшласа çырнă ĕçне вулакан умне кăларать. 2006 ç. пичетленнĕ уйрăм сыпăксене çулталăк вĕçĕнчи тишкерӳре Ю. Айташ тиркевлĕрех хак панăччĕ. Вĕсенче ĕнентерӳлĕх çителĕксĕр пулнине кăтартнăччĕ [1]. Сăвăç хайлавра «Кам эпĕ, ăçтан шăтса тухнă çемье шайĕнче, тăван халăх, тĕнче шайĕнче?» [2, с. 5]

ыйтăва татса пама тăрăшать. «Чăваш халăхĕн шăпи, чĕлхи, тĕнĕ, несĕлĕ, ăрăвĕ, тăхăмĕ, таврашӗ, рачĕ, йăхĕ, Ахар авалтан пуҫланса паяна ҫити тăсăлакан кунҫулĕ ҫинчен шухăшласа кăсăкланни ҫак хайлава ҫыртарчĕ» [2, с. 5], — ҫырать сăвăҫ. Поэмăра тĕрлĕ ăсчах шухăшĕсене шута илнĕ, хăйне май ăнлантарса панă. Тĕп сăнарсем те пур кунта: Халапҫă-автор, Шӳтҫĕ-комик Чудик, Синкерҫĕ-Трагик — Чудак, ҫыравҫăсем, ăсчахсем, паллă юрăҫсем, улах хăнисем, Асăм, Аваллăх. Уйрăм сыпăксене вĕсен ячĕпе йĕркеленĕ, теприсенче калуҫă хăй шухăшне мала кăларать. Хайлавра макарон чĕлхипе усă курни паянхи чĕлхе тăрăмĕнчен, тасамарлăхĕнчен тăрăхлас тенипе ҫыхăннă-тăр. Автор пирĕн ҫитменлĕхсене айккинчен кăтартать. Тытăмĕпе хăйне евĕрлĕ хайлавра С. Асамат тавлаштаракан, пуҫа ĕҫлеттерсе яракан шухăшсем сахал мар калать.

Паттăрлăх темине хускатакан, йăхри, таврари мухтавлă пĕр-пĕр ҫын ҫинчен каласа паракан поэмăсем ҫĕнĕ тапхăрта та пур. Вĕсенче XX ĕмĕрти лиро-эпика традицийĕсем тĕпре. Л. Федоровăн «Днепр паттăрĕ» (2014), «Чул чечек» (2014) поэмисем Тăван ҫĕр-шывăн Аслă вăрҫипе ҫыхăннă. Г. Кĕмĕлĕн «Шăпа» (2015) поэминче кукашшĕн синкерлĕ шăпи тĕпре. Хайлава уйрăм сыпăксем ҫине пайланă. Калу пуҫламăшĕнче тĕп сăнар вут ҫурнине сăнланă. Вăл урам тăрăх пыракан ĕрĕхсе кайнă лашана тытса чарать, лав ҫинчисене вилĕмрен хăтарать. Ҫакăнта ĕҫ-пуҫ тĕвĕленме тытăнать те. Хăюллă каччăна вырăс офицерĕ патша ҫарне илсе каять. Офицера ҫитнĕ ҫамрăк 1917 ҫ. пăлхав хыҫҫăн яла таврăнать, килти юхăннă хуҫалăха ура ҫине тăратать. Колхозсем йĕркелеме пуҫласан ял ертӳҫисем унăн пурлăхне туртса илеҫҫĕ, хăйне Магнитогорска ăсатаҫҫĕ. Завод хăпартнă ҫĕрте тăрăшакан Иван вăрҫă пуҫлансан хăй ирĕкĕпе фронта каять, штрафбатра ҫапăҫса паттăрла пуҫне хурать. Автор Иванăн аптраманлăхне, хăюлăхне, ҫирĕплĕхне палăртма тăрăшать. Паттăрлăх тымарĕ ăҫтан аталанса тухнине тĕпчет.

Г. Матвеева «Киле килчĕ салтак вăрҫăран» (2009), «Чăваш» (2015) поэмисенче вăрҫă хăварнă сурансем паянхи кун та манăҫа тухманнине сăнлать. «Чăваш» поэмăра вăрҫă вăхăтĕнче Польша территорийĕнче тылра тăшманпа кĕрешнĕ партизансен отрячĕ пирки сăмах пырать. Ҫак отряда Чăваш ятлă командир ертсе пынă. Унăн чăн ячĕ — Яков Николаевич Николаев. Паттăрăн арăмĕн те, Наҫтукăн, чылай йывăрлăх витĕр тухма тивет. Вăл алăри ачапа Белоруссирен тăван ялне таврăнма пултарать. Упăшки хыпарсăр ҫухалнине ҫынсем шанмасăр йышăнаҫҫĕ. Ҫак сăлтавшăн ҫамрăк хĕрарăмăн пурнăҫĕнче тата та йывăрлăхсем хушăнаҫҫĕ. Автор чăтăмлă та тӳсĕмлĕ хĕрарăм сăнарĕсене ĕнентерӳллĕ кăтартать. Вăрҫăра тата вăрҫа пула пуҫ хунисен ячĕсене асра тытмаллине астутарать.

Н. Ишентей иртнĕ вунă ҫуллăхра поэмăн ҫĕнĕ тĕсĕсене шутласа кăларассипе палăрнăччĕ [7]. «60 минутлăх шăплăх» (2011) хайлавăн жанрне вăл халăх поэми тесе палăртать. Ку публицистикăллă, политикăллă хавхаллă хайлав. Калуҫă «Тĕнчере мĕн вăйлă?» ыйту ҫине президент, банкир, депутат хурав шырани ҫинчен каласа парать. Вĕсем сăмах ăстинчен, цифра хуҫинчен, ҫĕр ĕҫченĕнчен, ăслăлăх ҫыннинчен, саккун ҫыраканран ыйтаҫҫĕ. Чайлдфри идейисене тытакан хĕрарăм чăнлăх манра тет, ача пахчинчи ачасем вара чăнлăх пирĕнте теҫҫĕ. Пробиркăри ачан монологĕ пур. Вăл хăй тымарсăр, чунсăр пулнишĕн пăшăрханать. Хайлаври калăва ҫул ҫӳрев мелĕпе йĕркеленĕ. Анчах тĕп сăнарсем хăйсене хумхантаракан ыйту пирки ҫынсем мĕн шухăшланине пĕлме ялсем, хуласем тăрăх ҫӳремеҫҫĕ, паянхи интернет технологийĕпе усă кураҫҫĕ. Телекĕпер урлă вĕсем тĕрлĕ вырăнта пурăнакан ҫынсемпе курса калаҫаҫҫĕ. Урама уҫăлма тухсан хĕрпе каччă чечек лартнине кураҫҫĕ. Чăнлăх юратура иккен, пурнăҫ ун ҫинче тытăнса тăрать.

Поэмăра автор ăсталăхĕ кашни сăнарăн пуплевне уйрăм виçепе, çемĕпе, хăйне евĕрлĕ чĕлхепе йĕркеленинче те палăрать. Чăнлăх шыракан президент, банкир, депутат ячĕсене кашни сыпăк, ĕç-пуç хыççăн тепрер хут калани А. Некрасовăн «Кому на Руси жить хорошо?» хайлавне аса илтерет.

Çармăс прозин паянхи сăн-сăпатне хакланă май Т. Н. Беляева авторсем ытларах истори темине хускатнине асăрхать. Аваллăх пирки çырма чылай çăмăлтарах, кунта шухăша ирĕке яма пулать. 1930-мĕш çç. репресси, вăрçă терт-нуши, 1990-мĕш çç. пăтăрмахлăхĕ, паянхи кун ыйтăвĕсем çинчен хайлама вара кăткăсрах, мĕншĕн тесен шухăша ирĕке яма çук [3, с. 36 — 41]. Ю. Сан сăвăç çак йывăрлăхсенчен хăрамасть. «Нацмэн» (2018) сăвăлла романта вăл чăваш пурнăçĕн хăй евĕрлĕхне иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çç. пуçласа 2010 ç. таран сăнласа кăтартать. Хайлава онегин çаврипе çырни хисепе тивĕçлĕ. Романăн хăйне евĕрлĕ пролог пур. Калуçă тăван ялне кайса килет, ял çынни кунта мĕнпе сывланине, мĕнле хуйхăсавăнăçпа пурăннине паллаканран ыйтса пĕлет. Йынкка Çтапанччĕн калаçăвĕнче иртĕхсе пурăннă çынсене явап тытмалли вăхăт та çитет текен шухăш палăрать. Тĕп сюжет йĕрĕ Макар платникăн Микул ятлă ывăлĕпе çыхăннă. Десантник пулма, кайран университета вĕренмешкĕн кĕме ĕмĕтленекен çамрăк амăшĕн ырă ятне хӳтĕлесе пуçтах ачана вĕлерет, тĕрме çынни пулса тăрать. Хайлавăн чылай пайĕ Микулăн тĕрмери пурнăçне сăнланипе çыхăннă. Мĕн пур йывăрлăха чăтса ирттерет çамрăк, ирĕке тухать, савнă çыннине чунсăр упăшкинчен туртса илме пултарать. Анчах та суйлавçăсен таса мар ĕçĕсене курнă кӳнтелене аварие лексе вилмелле тăваççĕ.

Хайлав виçĕ пайран тăрать: малтанах — Микулăн тертлĕ пурнăçĕ, иккĕмĕш сыпăкра — унăн савнă хĕрĕн Анукăн шăпи. Виççĕмĕш пайра вĕсен çулĕсем пĕрлешеççĕ, анчах та нумайлăха мар. Романри калăва публицистикăллă, политикăллă çаврăмсемпе çăралатнă. Калуçă пуçлăхсене, наци конгресĕнче ларакансене вăрçать, вĕсем пирки хăй мĕн шухăшланине уççăн калать. Хайлавра чăваш ялĕн пуласлăхĕ, аваллăхĕ, пăлхар тата хун тымарĕсем çинчен шута ӳкни те пур. Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çç. пăтăрмахлăхĕ çамрăксен шăпине хуçнине те кăтартнă. Автор чăваш литературинче сайра тĕл пулакан «тĕрме çынни» темăна аталантарать.

Ю. Санăн геройĕсене икĕ ушкăна пайлама пулать: Микулпа унăн майлисем. Вĕсем ырă, анчах лайăх мар çынсенчен пĕр вĕçĕм нуша тӳсеççĕ; Микулана хирĕççисем — усал, хăйсемшĕн çеç тăрăшакан, пурлăха сума сăвакан, чунсăр, чăвашлăха маннă, ăна курайман çынсем. Усал чунлă сăнарсене, пролоrра систерсе каланă пекех, чыссăр вилĕм, шăпа тавăрни кĕтет. Уйрăм сăнарсен прототипĕсем пурри те сисĕнет (Турцири университета вĕренме кĕме сĕнекен сухаллă çын). Хайлаври хĕрарăм сăнарĕсем те ĕнентерӳллĕ, хисепе тивĕçлĕ. Вĕсем йывăрлăха, уйрăлăва çирĕппĕн чăтса ирттереççĕ.

Автор хайлава вырăсла та хăех куçарнă. Кунта хускатнă ыйтусене «Нацмэн» калаврa малалла тăснă. Сăвăлла роман паянхи кун пулса иртекен ĕç-пуçа хак пама тăрăшнипе пĕлтерĕшлĕ.

Н. Карлин çырнă «Селиме» (2016) балладăри сюжет халăх сăмахлăхĕнчи вăйпа качча панă хĕр мотива çывăх. Ĕçченлĕхпе, хитре юрланипе палăрса тăракан хĕре ялти арман хуçи ашшĕпе амăшĕн парăмĕшĕн качча илесшĕн. Вĕсен туйне пăсас тесе Иштукан, тăлăх тарçă, пуянăн арманне вут тивертет. Хăй Çĕпĕре ăсанать. Шанчăка çухатнă Селиме сĕрĕм тивнипе вилет. Виличчен телейсĕр шăпи çинчен юрă юрласа хăварать. Автор «социаллă пурнăç баллади» [4] жанр традицийĕсене тытса пырать. Малтанах Селимен пурнăçĕ савăк, вăл мĕн пур ĕçе юрласа пур-

наçлать, Иштуканпа шăпине çыхăнтарма ĕмĕтленет. Хĕр пурнăçран хăй ирĕкĕпе уйрăлас тени халăх сăмахлăхĕнчи сюжетлă юрăсен традицийĕсене çывăх.

**Пĕтĕмлетӳ**

2011 — 2020 çç. чăваш лиро-эпики жанр тĕсĕсем, хускатакан ыйтусем тĕлĕшĕнчен нумай енлĕ пулнипе палăрса тăрать. Çыравçăсем литературăра XX ĕмĕрте çирĕпленнĕ поэзи традицийĕсене малалла аталантараççĕ, вĕсем урлă паянхи куна хаклама тăрăшаççĕ. Лиро-эпикăллă хайлавра халăх сăмахлăхĕпе усă куракансем, тăван тăрăхăн, халăхăн аваллăхне сăнлакансем шутĕнче Г. Юмарта, С. Асамата, А. Малышева асăнмалла. Сăвăçсем иртнипе паянхи тачă çыхăнура пулнине кăтартаççĕ. Вăрçăри паттăрлăха мухтасси юбилейсем irттернипе, асаттесен ячĕсене вилĕмсĕрлетессипе çыхăннă. Йывăр вăхăтра çынна паттăрла ĕç тума мĕн хавхалантарнине Л. Федорова, Г. Кĕмĕл, Г. Матвеева шыраççĕ. Вĕсем тĕп сăнарăн кун-çулĕнчи пĕлтерĕшлĕ самантсене, вăрçă вăхăтĕнчи паттăрлăхне сăнлаççĕ. Чăваш лироэпикине çĕнĕлĕх кĕртес енĕпе Н. Ишентей палăрать. Вăл «паянхи поэма» çĕнĕ жанр тĕсне алла илет, унăн калăвне çул çӳрев мелĕпе йĕркелет. Обществăри социаллă тĕрлĕ сий мĕнпе пурăннине кăтартать. Н. Карлинпа Ю. Сан лиро-эпикăн классикăллă тĕсĕсене аталантараççĕ. Н. Карлин социаллă балладăра вăйпа качча панă хĕр мотивăн çĕнĕ тĕслĕхне каласа кăтартать. Ю. Сан сăвăлла роман традицийĕсене алла илет, хайлава онегин çаврипе çырать. Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çç. пулса иртнĕ ĕçсене хак парать, Унăн романтикăллă сăнарĕ пурнăçри тĕрĕсмарлăхсене хирĕç тăрать. Автор тăван чĕлхен иртни тата пуласлăхĕ, чун тасалăхĕ тата çирĕплĕхĕ, чыс тата тивĕç ыйтусене хускатать; публицистикăллă тата политикăллă хавхасене калăва кĕртет.

ÇĂЛКУÇСЕН СПИСОКĔ / СПИСОК ИСТОЧНИКОВ

1. Айташ Ю. Пурăнать поэзи, пурăнать [Жива поэзия, жива] // Тăван Атăл. 2007. 7 №. С. 117 — 121.

2. Асамат С. Чăн сăмахăн суйи çук… Автобиографиллĕ, историпе публицистикăллă, халаплăюмахлă поэма [В слове правды кривды нет… Автобиографическая, историко-публицистическая, былинно-сказочная поэма]. Шупашкар: Çĕнĕ вăхăт, 2020. 616 с.

3. Беляева Т. Н., Кудрявцева Р. А., Шкалина Г. Е., Гусева Н. В. Современная марийская лирика: художественные модели мира и поэтика творческой индивидуальности: коллективная монография. Йошкар-Ола: Марийский государственный университет, 2022. 182 с.

4. Игнатьева Е. А. Чувашская эпическая поэзия: проблемы формирования и развития жанров: монография. Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2005. 202 с.

5. Никифорова В. В. Чувашская повесть начала XX века // Чувашский гуманитарный вестник. 2023. № 18. С. 135 — 151.

6. Никифорова В. В. Чăваш прозин 2016 — 2020 çулсенчи аталанăвĕ [Развитие чувашской прозы 2016 — 2020 годов] // Чăваш халăх историйĕпе культурин çивĕч ыйтăвĕсем: статьясен пуххи = Актуальные вопросы истории и культуры чувашского народа: сборник статей. Вып. 7 / сост. и науч. ред. В. В. Никифорова. Чебоксары: ЧГИГН, 2024. С. 168 — 193.

7. Софронова И. В. Особенности лиро-эпики Н. Ишентея // Духовные основы отношений человек — природа: материалы Всероссийской (Национальной) научно-практической конференции с международным участием (г. Чебоксары, 25 января 2023 г.). Вып. 4 / ответственные редакторы Р. В. Михайлова, Е. В. Агаева. Чебоксары: ЧГСХА, 2023. С. 291 — 294.

8. Софронова И. В. XX ĕмĕр вĕçĕнчи чăваш поэзийĕ (1991 — 2000 çулсем) [Чувашская поэзия конца XX века (1991 — 2000 годы)] // Чăваш халăх историйĕпе культурин çивĕч ыйтăвĕсем: статьясен пуххи = Актуальные вопросы истории и культуры чувашского народа: сборник статей. Вып. 7 / сост. и науч. ред. В. В. Никифорова. Чебоксары: ЧГИГН, 2024. С. 114 — 138.

9. Энтепе А. Манра тӳпе пурăнать [Во мне живет небо] // Тăван Атăл. 2020. 9 №. С. 60 — 63.

REFERENCES

1. Aytash Y. Purănat poetry, purănat [Poetry is alive, alive] // Tăvan Atăl. 2007;7:117 — 121. (In Chuvash)

2. Asamat S. Chăn sămakhăn suyi çuk... Avtobiografillĕ, istoripe publicistikăllă, halaplă-yumahlă poema [There is no falsehood in the word of truth... Autobiographical, historical-journalistic, epic-fairy-tale poem]. Shupashkar;2020:616. (In Chuvash)

3. Belyaeva T. N., Kudryavtseva R. A., Shkalina G. E., Guseva N. V. Modern Mari lyrics: artistic models of the world and the poetics of creative individuality: collective monograph. Yoshkar-Ola;2022:182. (In Russ.)

4. Ignatyeva E. A. Chuvash epic poetry: problems of formation and development of genres: monograph. Cheboksary;2005:202. (In Russ.)

5. Nikiforova V. V. Chuvash narrative of the early 20th century // Chuvash humanitarian Vestnik. 2023;18:135 — 151. (In Russ.)

6. Nikiforova В. В. Chăvash prozin 2016 — 2020 çulsenchi atalanăvĕ [Development of Chuvash prose in the period of 2016-2020] // Chăvash halăkh istoriiĕpe kulturin çivĕch ytăvĕsem: article sen pukhhi = Current issues of history and culture Chuvash people: the collection of articles. Vol. 7 / comp. and scientific ed. V. V. Nikiforova. Cheboksary;2024:168 — 193. (In Chuvash)

7. Sofronova I. V. The lyric-epic features of N. Ishentey // Spiritual foundations of the relationship between man and nature: materials of the All-Russian (National) scientific and practical conference with international participation (Cheboksary, January 25, 2023). Issue 4 / editors-in-chief R. V. Mikhailova, E. V. Agaeva. Cheboksary;2023:291 — 294. (In Russ.)

8. Sofronova I. V. 20 ĕmĕr vĕçĕnchi chăvash poetryĕ (1991 — 2000 çulsem) [Chuvash poetry of the late XX century (1991 — 2000)] // Chăvash halăkh historyĕpe kulturin çivĕch yytăvĕsem: articlesen pukhhi = Current issues in the history and culture of the Chuvash people: the collection of articles. Vol. 7. / comp. and scientific Ed. V.V. Nikiforova. Cheboksary;2024:114 — 138. (In Chuvash)

9. Entepe A. Manra tope purănat [The sky lives in me] // Tăvan Atăl. 2020;9:60 — 63. (In Chuvash)

Статья редакцие 10.06.2025 çитнĕ;
рецензиленĕ хыççăн 15.09.2025 ырланă; 22.09.2025 пичете йышăннă

*Автор çинчен*:
**Софронова Ирина Владимировна**, И. Н. Ульянов ячĕллĕ
Чăваш патшалăх университечĕн доценчĕ
(428015, Раççей, Шупашкар хули, Мускав пр., 15),
Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ăслăлăх аслă ĕçтешĕ
(428015, Раççей, Шупашкар хули, Мускав пр., 29, 1 корп.),
филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ,
ORCID: https://orcid.org/0000-0001-7695-4968., muxtar2@yandex.ru
*Пайталăх конфликчĕ: автор пайталăх конфликчĕ çуккине пĕлтерет.*
*Автор ал çырăвăн юлашки вариантне вуласа тухнă, ырланă.*

Статья поступила в редакцию 10.06.2025;
одобрена после рецензирования 15.09.2025; принята к публикации 22.09.2025

*Информация об авторе*:
**Софронова Ирина Владимировна**, доцент Чувашского
государственного университета им. И. Н. Ульянова
(428015, Россия, г. Чебоксары, Московский пр., 15);
старший научный сотрудник Чувашского
государственного института гуманитарных наук
(428015, Россия, г. Чебоксары, Московский пр., 29, корп. 1),
кандидат филологических наук,
ORCID:https://orcid.org/0000-0001-7695-4968., muxtar2@yandex.ru
*Конфликт интересов: автор заявляет об отсутствии конфликта интересов.*
*Автор прочитал и одобрил окончательный вариант рукописи.*

The article was received by the editors on 10.06.2025;
approved after reviewing 15.09.2025; accepted for publication 22.09.2025

*Information about the author*:
**Irina V. Sofronova**, associate professor at I. N. Ulyanov Chuvash State University
(15, Moskovskiy pr., Cheboksary, Russia, 428015); senior researcher
at Chuvash State Institute of Humanities
(building 1, Moscow Avenue, 29, Cheboksary, Russia, 428015),
Candidate of Philology Sciences,
ORCID: https://orcid.org/0000-0001-7695-4968., muxtar2@yandex.ru
*Conflict of interests: the author declares that thare is no conflict of interests.*
*The author has read and approved the final version of the manuscript.*